25-мěш çул тухать. Хакě 15 пус.

1942 СЕНТЯБРЬ 8 ЫТЛАРИКУН 209 (6144) №

Пěтěм тěнчери пролетарисем, пěрлешěр!

# Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĚПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĚН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĚН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĚН ХАÇАЧĚ

*МУСКАВ, КРЕМЛЬ*

## Оборонăн Государственнăй Комитечěн Председательне Иосиф Виссарионович Сталина

### Хаклă Иосиф Виссарионович!

Молотов хулинчи промышленность предприятийěсенче ěçлекен рабочисемпе служащисем тата инженерла-техникла работниксем, фронта пулăшассине вăйлатас ыйтупа хулари ěççыннисен пěрлешÿллě митингне пухăннăскерсем, Сире, ССР Союзěнчи халăхсен çулпуçне, Совет государствин хěçпăшаллă вăйěсен руководительне, пěтěм чун-чěререн ырă сунса салам ярăççě.

Эпир хамăрăн тăван çěршывăн питех те йывăр кунсем килсе тухнă вăхăтра пухăнтăмăр. Пирěн çěршывпа государствăна пěтерсе тăкма тата пирěн пěтěм халăха вěлерсе пěтерме, пирěн халăхăн мěнпур пуянлăхěсене тытса илме хапсăнакан тискер те усал тăшман, хăй йывăр çухатусем тÿснине, юн юхтарса халран кайнине пăхмасăрах, малалла çěмěрсе кěме хăтланать. Анчах нимěçсем çěнтерěве алла илеймěç! Аслă совет халăхне пусмăрлăха кěртсе ÿкерсеймěç, пире чура тăваймěç. Халăхăн мěнпур вăйěсем çěнтерÿ тăвас шухăшпа, хамăрăн вăйхала, хамăрăн пурнăçа хěрхенмесěр кěрешсе çěнтерÿ тăвас шухăшпа вěресе тăраççě. Молотов хулинчи мěнпур ěççыннисем çав çěнтерÿ ěмěчěпе пурăнаççě. Пирěн лозунг: фронта пур енěпе те пулăшассишěн тылра пěтěм вăя хурса ěçлемелле, хамăрăн ěçшěн пире тăван çěршыв умěнче, Хěрлě Çар умěнче, Сталин юлташ, Сирěн умăрта намăс ан пултăр. Халě акă пирěн хулари промышленность предприятийěсен коллективěсем, Пěтěм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса ěçлесе, август уйăхěнче пысăк утăм туни çинчен Сире каласа пама эпир питех те савăнăçлă. Молотов хулинчи пур предприятисем те, чугунçулпа шыв çул транспорчěсем уйăхри плана иртерсе тултарчěç. Сталин ячěпе, Молотов ячěпе, Дзержинский ячěпе, Киров ячěпе тата Орджоникидзе ячěпе тăракан заводсен мухтавлă коллективěсем малта пыраççě. Çак çитěнěве эпир сасартăк мар тунă. Ана эпир вăрçă вăхăтěнчи йывăр та хěрÿллě ěçпе çěнтерсе илнě.

Нимěç оккупанчěсем çěршывăн питех те паха промышленность предприятийěсене чылай тытса илчěç. Уралри заводсене, пирěн Молотов хулинчи заводсене çав çухатусене витес тата фронта кирлě хěçпăшалсемпе боеприпассене çителěклě таранах туса кăларас йывăр задача тиврě. Пирěн предприятисене ÿстерне заданисем пачěç. Хулана фронт çывăхěнчи районсенчен пысăк заводсем чылай килсе вырнаçрěç. Хěллехи 40 градуслă сивěсенче рабочисемпе служащисем тата инженерла-техникла работниксем вěсене ура çине тăратассишěн хăйсен вăйěсене хěрхенмесěр ěçлерěç. Çав заводсене рекордлă кěске срокра вырнаçтарса çитерсе пěтěм хăвачěпех ěçе ячěç.

Пирěн хулари заводсем пурте отечественнăй аслă вăрçă пуçланнăранпа продукци туса кăларассине икě хут ÿстерчěç, уйрăм предприятисем вара çакăнтан та ытларах продукци паракан пулчěç. Молотов ячěпе тăракан завод тěп изделисем енěпе продукци туса кăларассине сакăр хут, Сталин ячěпе тăракан завод виçě хут, Киров ячěпе тăракан завод çичě хут, Дзержинский ячěпе тăракан завод виçě хут ÿстерчěç. Çавăн пекех ытти предприятисем те чылай иртерсе продукци туса кăлараççě.

Вăрçă пуçланнăранпа 14 уйăх хушшинче хулари предприятисенче ěç тухăçлăхě 40 процент ÿсрě. Хулари çичě предприятире кăна рабочисемпе инженерла-техникла работниксем çав вăхăт хушшинче рационализаторла сěнÿсем пиншер сěнÿ панă. Çав сěнÿсене пурнăçа кěртсе пыни çěршывăн 34 миллион тенкě укçа перекетлесе хăварма тата продукци туса кăларассине чылай ÿстерме май пачě.

Заводсене çěнěрен кěнě рабочисене вěрентсе хатěрлес тěлěшпе те эпир кěске вăхăт хушшинчех нумай ěçсем турăмăр. Заводсен шалти резервěсене мěн май килнě таран ытларах мобилизацилес тěлěшпе заводсенчи хуçалăх тата парти руководителěсем пысăк ěçсем тунă.

Сталин юлташ, эпир Сире рапортласа пěлтерекен çитěнÿсене тунă çěрте социализмлă аслă ăмăртăвăн хăватлă вăйě пысăк пулăшу пачě. Социализмлă ăмăрту пире малалла татах та ытларах вăй хурса ěçлеме хавхалантарать, мěншěн тесен, эпир ăнланатпăр: тунă çитěнÿсем çинче чарăнса ларма юрамасть, пирěн малашне татах та пысăкрах, татах та лайăхрах çитěнÿсем тăвассишěн кěрешмелле.

Хаклă Сталин юлташ!

Халě эпир Октябрьти Аслă революци 25 çул тултарнине кěтсе илме хатěрленетпěр. Хамăрăн тăван çěршыв умěнчи пысăк ответлăха ăнланса илсе, эпир хамăр çине çакăн пек обязательствăсем илетпěр тата çав обязательствăсене пěтěмěшпех пурнăçа кěртме Сире сăмах паратпăр. Пирěн хулара государство панă плана пурнăçа кěртмен пěр предприяти те ан пултăр тесе, эпир пěтěм вăя хурса ěçлěпěр.

Сентябрь уйăхěнче эпир хулари кашни рабочин ěç тухăçлăхне, август уйăхěнче ÿстернипе танлаштарсан, 5 процентран кая мар ÿстерме сăмах паратпăр.

Октябрьти Аслă революци 25 çул тултарнă кун тěлне эпир хěçпăшалсемпе боеприпассен лайăхлатнă, çěнě йышши, хăватлă тěслěхěсене туса кăларас ěçе алла илсе йěркелесе яратпăр.

1942 çул вěçлениччен рационализаторла сěнÿсене ěçе кěртсе пынипе эпир 20 миллион тенкěрен кая мар перекетлесе хăваратпăр.

1942—43 çулхи хěле вăхăтра та пахалăхлăн хатěрленсе çитетпěр, шěвек топливăна çирěп топливăпа мěн май килнě таранах улăштаратпăр, çěр кăмрăкне—вутăпа тата торфпа улăштаратпăр. Электроэнергие 5 процентран кая мар перекетлесе хăваратпăр.

Сталин юлташ, Хěрлě Çара пулăшас, фашистла варварсене çěнтерес шухăшсăр пуçне, пирěн урăх шухăш çук. Çакна пурнăçа кěртес тесе, хамăрăн вăйсене хěрхенмесěр ěçлеме Сире сăмах паратпăр. Эпир пěлетпěр, эсир ăслăн ертсе пынипе эпир çěнтеретпěрех!

**(Митингра 120 пин çын пулнă).**

## Виççěмěш квартал планне 120 процент тултарчě

ВĂРМАР, сентябрěн 4-мěш. **(Телефонпа).** Спорт инвентарěсем тăвакан фабрика виççěмěш кварталти производство планне 120 процент тултарчě. Августра фабрика коллективě производствăна чылай урăхлатса çěнетнě. Апла пулин те рабочисенчен 37 проценчě стахановла тухăçлăхпа ěçлерě. Опытлă работницăсем шлифовщица М. Ефимова, упаковщица Д. Павлова, Н. Кириллова, полировщица П. Никифорова юлташсем уйăхри нормăна 250—350 процент тултарчěç. Вěсен продукци пахалăхě те лайăх.

Коллектив халě хěле кěме тимлěн хатěрленет. Вăрманта, вутă хатěрленě çěрте, 21 çын, 3 автомашина тата 14 лаша ěçлеççě. Хатěрленě вутта машинăсемпе тата лашасемпе турттарсах тăраççě. Ку вăхăтчен 150 кубометр турттарса кăларнă.

**М НИКОЛАЕВ.**

## *Комбинатăн августри итогěсем*

ÇЕМĚРЛЕ, сентябрěн 7-мěш. **(Телефонпа, хамăр, корр.).** Пěтěм Союзри социализмлă ăмăртăвăн 4-мěш уйăхě—август—иртрě. Комбинат коллективě хăйěн иртнě уйăхри ěç итогěсене туса тухрě. Коллектив августра июльринчен лайăхрах ěçленě. Хатěр продукци туса кăларас плана 117 процент тултарнă.

Уйрăм цехсенчен Павлов юлташ ертсе пыракан цех мала тухнă. Вăл уйăхри задание 163 процен тултарнă. Цех коллективě комбинатăн куçса çÿрекен Хěрлě ялавне хăйěн аллинче çирěп тытса тăрать.

Абушахмин юлташăн цехě те августра тухăçлăн ěçленě. Задание 33 процент иртерсе тултарса, шалти ресурссемпе туллин усă курнине кăтартнă.

Августра чылай рабочисем хăйсен ěç тухăçлăхне татах та ÿстернě. Опытлă стахановецсен ěç тухăçлăхě уйрăмах пысăк. Токарь Посадин юлташ уйрăм кунсенче нормăран 5,5 хут тухăçлăрах ěçленě, уйăхри нормăна вăтамран 478 процент тултарнă. Сборщиксенчен Большаков, Иванова, Герасимов, Уточкин, Маркелов, Сизов, Васильев тата Шишкин юлташсем—двухсотниксем, Ишмендеров, Ахонин тата Розанов юлташсем—трехсотниксем шутланаççě.

## ИККĚМĚШ ВОСКРЕСНИК

КУКЕÇ, сентябрěн 7-мěш. **(Телефонпа).** Ěнер ВЛКСМ Шупашкар райкомě государствăна массăллăн тырă парас тěлěшпе иккěмěш воскресник ирттерчě. Воскреснике хутшăннă комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем 500 лавпа государствăна 140 тонна тěштырă, 45 тонна пахча-çимěç леçсе панă.

## Чăваш тата тутар халăхěсен чаплă ывăлěсем

Летчик-майор Фаткулин юлташ ача чухне беспризорник пулнă. Совет влаçě беспризорникран чаплă çын—Совет Союзěн Геройě турě. Хусан комсомолě пăхса çитěнтернěскер, тутар халăхěн ывăлě, майор Фаткулин хăюллă летчик-командир пулнипе паллă пулса тăрать. Вăл командир пулса ертсе пыракан подразделени Совет Союзěн Геройěсене 8 çынна тата 51 орденоносеца пăхса çитěнтернě. Фаткулин юлташ хăй 80 штурмовкăра ытла пулнă, тăшманăн 2 самолетне персе ÿкернě.

Фаткулин юлташпа пěрле отечественнăй вăрçăн малтанхи кунěсенчен пуçласах тăшмана хирěç Фаткулинăн çапăçури комиссарě, чăваш халăхěн ывăлě, батальоннăй комиссар Васильев юлташ çапăçать. Советски районри Чемей ялсоветěнчи Лебедкино ялěнче çуралса, детдомра ÿснěскер, вăл Совет Союзěн Геройě пулса тăчě.

Чăваш халăхěпе тутар халăхěн представителěсем Совет халăхěн чыслăхěпе ирěклěхěшěн паттăррăн çапăçаççě.

**Ÿкерчěк çинче:** Совет Союзěн Геройě майор **Ф. М. Фаткулин** тата Совет Союзěн Геройě батальоннăй комиссар **Б. М. Васильев** (сылтăмра) аэродром çинче хăйсем вěрентсе çитěнтернě летчиксем вěçнине сăнаççě.

А. ФРИДЛЯНСКИЙ фотоÿкерчěкě. (ТАСС фотохроники).

# Совет Информаци Бюровěнчен

## Сентябрěн 6-мěшěнчи каçхи пěлтерÿрен

Сентябрěн 6-мěшěнче пирěн войскăсем противника хирěç **Сталинградран** çурçěр-хěвеланăçнерехре тата кăнтăр-хěвеланăçнерехре, çавăн пекех тата **Новороссийск, Моздок** районěсенче хаяррăн çапăçнă.

Ытти фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

Иртнě эрнере, августăн 30-мěшěнчен пуçласа сентябрěн 5-мěшне çитиччен, сывлăшри çапăçусенче, аэродромсем çинче тата зенитнăй артиллерирен персе нимěçсен 460 самолетне пěтерсе тăкнă. Çав вăхăт хушшинче пирěн 256 самолет пěтнě.

Балтика тинěсěнче пирěн карап противникăн 8.000 тонна водоизмещениллě транспортне путарнă.

* * *

Сентябрěн 5-мěшěнче пирěн авиаци чаçěсем фронтăн тěрлě участокěсенче нимěçсен 16 танкěпе бронемашинине, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 100 автомашинине ытла пěтерсе тăкнă е сиенленě, полевой тата зенитнăй артиллерин 10 батарейине пусарса лартнă, боеприпассен 2 складне тата горючи складне сирпěнтерсе янă, чугунçул çинчи 3 эшелона çěмěрнě, противникăн пехотине пěр батальона çити сапаласа янă, пěр пайне пěтерсе тăкнă.

Сентябрěн 5-мěшěнче нимěç самолечěсен виçě ушкăнě, пěтěмпе 70 бомбардировщика çити, Мускав патне вěçсе пыма хăтланнă. Пирěн истребительсем тăшманăн самолечěсене Мускав патне пымалли инçетри вырăнсенче хирěç пулнă, çав самолетсене сапаласа ярса, вěсене каялла çаварса янă. Сывлăшри çапăçусенче нимěçсен 11 бомбардировщикне персе ÿкернě. Пирěн пěр самолет пěтнě.

* * *

Сталинградран çурçěр-хěвеланăçнерехре пирěн войскăсем противника халăх пурăнакан темиçе пунктран хăваласа кăларнă. Çав çапăçусенче тăшман пысăк çухатусем тÿснě. Халăх пурăнакан Г. пунктěнче кăна пирěн боецсем нимěçсен 6 танкне, 2 бронемашинине, артиллерин 2 батарейине пěтерсе тăкнă тата 350 гитлеровеца ытла вěлерсе пěтернě. 11 пулемет, 2 оруди, 5 миномет тата боеприпассен складне тытса илнě. Тепěр участокра совет танкисчěсем противник вырнаçса тăнă вырăна çěмěрсе кěрсе кайнă та 8 противотанковăй оруди, 7 танк, 23 автомашина пěтерсе тăкнă тата нимěç салтакěсемпе офицерěсене 200 çынна çити вěлернě.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хěвеланăçнерехре гитлеровецсен танкěсемпе пехотин пысăк вăйěсем авиаци пулăшса пынипе пирěн çирěплетнě рубежсене тăтăшах атакăланă. Çапăçусем тата ытларах çивěчленсе кайнă. Совет чаçěсем позицисене хăйсен аллинче тытса тăраççě, тăшманăн атакисене сире-сире яраççě. Н-ски чаçри артиллеристсем нимěçсен 16 танкне тата гитлеровецсене 2 ротăна çити пěтерсе тăкнă. Пирěн оборонăна шала сăрхăнса кěнě нимěç автоматчикěсен ушкăнне çаварса илсе пěтěмпех пěтерсе тăкнă.

* * *

Новороссийск районěнче пирěн чаçсем противникăн танкěсемпе пехотине хирěç оборонăллă йывăр çапăçусем туса пынă. Пěр участокра Н-ски чаçăн боецěсем 19 автомашина пěтерсе тăкнă тата румынсен пехотин пěр батальонне çапса аркатнă. Артиллерист-моряксем, Лаврентьев юлташ ертсе пынипе, противникăн артиллерийěн 2 батарейине тата миномечěсен пěр батарейине пусарса лартнă, нимěçсен 2 танкне çунтарса янă. Пěр тěлте пирěн чаçсем, противникăн йышлăрах вăйěсем хěснипе, çапăçса пырса çěнě позицисем патне чакнă. Штурмовик-комсомолецсен Володин капитан ертсе пыракан звени противникăн хуралра çÿрекен 3 катерне путарнă.

* * *

Моздок районěнче пěр высоташăн пынă вăйлă çапăçура 27 пулемет, 25 миномет, вăл шутра 9 миномет ултă кěпçеллисене, тата 12 оруди пěтерсе тăкнă, противникăн салтакěсемпе офицерěсене 800 çынна çити вěлерсе пěтернě. Нимěçсен шыв рубежě урлă каçнă танкěсен ушкăнне пирěн артиллери персе чарса лартнă. Пирěн артиллеристсем нимěçсен 8 танкне пěтерсе тăкнă.

* * *

Воронежран кăнтăртарахра Н-ски чаçăн боецěсем противника хирěç халăх пурăнакан пěр пунктра вăйлăн çапăçаççě. Пирěн артиллерипе минометсем, вăйлăн персе тăрса, пěр кун хушшинче нимěçсен 2 танкне пěтерсе тăкнă тата противникăн салтакěсемпе офицерěсене пěр ротăна çити вěлерсе пěтернě.

## Сентябрěн 7-мěшěнчи ирхи пěлтерÿ

Сентябрěн 7-мěш ыран тенě чух çěрле пирěн войскăсем противника хирěç **Сталинградран** çурçěр-хěвеланăçнерехре тата кăнтăр-хěвеланăçнерехре, çавăн пекех тата **Новороссийск, Моздок** районěсенче çапăçнă.

Ытти фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Сталинградран çурçěр-хěвеланăçнерехре вăйлă çапăçусем пынă. Н-ски часть противника атакăласа хăйěн позицийěсене лайăхлатнă. Çапăçу хирěнче вилнě 280 гитлеровец тата нимěçсен çунса кайнă 5 танкě выртса юлнă. Пирěн боецсем 7 пулемет, 2 миномет, 36 автомат, 200 винтовкăна çити тата боеприпассем нумай тытса илнě. Тыткăна илнисем пур. Тепěр участокра хаяр çапăçура 3 танк тата гитлеровецсен 2 ротине пěтерсе тăкнă. Пехота хěçпăшалěнчен персе, противникăн бомбардировщикне ÿкернě.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хěвеланăçнерехре пирěн войскăсем противникăн танкěсемпе пехотине хирěç хаяррăн çапăçнă, Н-ски соединенин участокěнче нимěçсем пирěн оборона рубежне атакăланă. Тăшманăн танкěсем пирěн войскăсем вырнаçнă вырăна кěрсе кайма пултарнă. Совет боецěсем, минометсемпе пулеметсенчен персе, танксем хыççăн пыракан гитлеровецсене арпаштарса янă та, флангран пырса çапса, вěсене каялла чакарнă. Çав вăхăтрах противотанковăй тупăсемпе противотанковăй пăшалсенчен персе, нимěçсен 12 танкне çěмěрнě. Пăртак тăрсан гитлеровецсем çав участокра тата тепěр хут атакăланă. Тăшманăн çав атаки те пăчланса ларнă. Тата 2 танк, 200 салтакпа офицера çити çухатса, противник хăйěн малтанхи позицийěсем патне чакнă.

* * *

Новороссийск районěнче совет войскисем противникăн танкěсемпе пехотине хирěç оборонăллă çапăçусем туса пынă. Жигачев юлташ ертсе пыракан краснофлотецсен подразделенийě пěр высотана йышăнма хăтланнă гитлеровецсен атакине сирсе янă. Противникăн 100 салтакěпе офицерě ытла вилнě. Пирěн моряксем çав паха высотана хăйсен аллинче тытса тăраççě.

Моздок районěнче пирěн чаçсем противникăн шыв рубежě урлă каçнă группировкине хирěç çапăçнă. Беспалько лейтенантăн подразделенийěнчи боецсем тата Каюмов юлташ ертсе пыракан пулеметчиксем хăйсене шеллемесěр çапăçнă. Пěр кун хушшинче вěсем противникăн пехотине 2 ротăна çити пěтерсе тăкнă.

* * *

Хěвеланăç фронтěнче пирěн штурмлакан тата бомбăсем пăрахакан авиаци противникăн аэродромěсене тата тепěр хут пырса çапнă. Н-ски чаçри летчиксем нимěçсен 24 самолетне пěтерсе тăкнă е сиенленě. Унсăр пуçне, сывлăшри çапăçура противникăн 2 самолетне персе ÿкернě, 2 самолетне çěмěрнě.

* * *

Хěвеланăç фрончěн участокěсенчен пěринче нимěçсен пěрремěш танковăй дивизийěнчи ефрейтор Франц С. хăйěн ирěкěпе Хěрлě Çар енне куçнă. Вăл пěр офицер патěнче денщик пулса ěçленě. Çав тыткăна лекнě салтак çапла каласа панă: «Пěрремěш танковăй дивизи нумайччен оборонăра тăнă. Июлěн 17-мěшěнче çав дивизи тыла кайма приказ илнě. Каннă хыççăн пире кăнтăра яма шутланă. Офицерсем салтаксене кăнтăрти фронтра вěсене нумай пурлăх тата тутăллă пурнăç кěтсе тăни çинчен каланă. Вырăссем наступлени туни нимěç командовани планěсене арпаштарса ячě. Эпир канмалли вырăна çитсе анчах ěлкěртěмěр, — пирěн дивизие каялла тавăрма хушакан приказ килсе çитрě. 400 километр кайсан, дивизие çапăçăва кěртсе ячěç. Пирěн мотополк малтанхи çапăçусенчех хăйěн йышěн 65 процентне, 13 танк, 5 бронемашина, 5 противотанковăй оруди, 6 тупă, 13 пулемет, 11 миномет тата боеприпассен склачěпе продовольстви складне çухатрě. Пěтěм дивизи те питě пысăк çухатусем пÿсрě».

## Фашистсен çаратуçă-çарě Дон çинче

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, сентябрěн 5-мěш. **(ТАСС спецкорě).** Дон тăрăхěнчи çеçенхирсем çине нимěçсем выçса касăлнă саранчасем пекех пырса тапăнчěç. Вěсем казаксен пуян станцисемпе хуторěсене çěмěрсе кěре-кěре, халě кăна хăйсен пуянлăхěпе тата илемлěхпе куçа илěртсе ларакан çуртсене çаратма тытăнчěç. Станицăсенче юлнă старихсемпе хěрарăмсене тата ачасене гитлеровецсем вěлерме тытăнчěç, чуралăхра выçă вилес шăпа умне тăратаса хăварчěç. Пуян пурнăçпа хаваслă юрăсен крайě куççуллě край пулса тăчě.

Дон çинчи фашистла каторгăн тискерлěхěсем çинчен унтан хăтăлса тухнă çынсем, оккупантсен ирсěр ěçěсене хăйсен куçěпе курнăскерсем, каласа параççě. Нижне-Чирская станицăра нимěçсем, халăхран мěнпур тырпула тытса илсе, Германие ăсатнă. Вăрă-хурахсем, пушартан çăлăнса юлнă мěнпур çуртсем тăрăх çÿресе, вěсенче нимěн те — пěр ěне те, пěр сурăх та, пěр чăх та хăварман. Кунта тата çывăхри хуторсенче çаратнă выльăх-чěрлěхе те вěсем çавăн пекех Германие ăсатнă. Фашистла вăрă-хурахсем çакăнпа чарăнса тăман, вěсем колхозниксен çÿпçийěсемпе арчийěсене уçса, ěмěр пухса пынă пурлăхсене— тумтирсене, урана тăхăнмаллисене, хěрарăмсемпе арçынсен аялтан тăхăнмалли кěписене пěтěмпех çаратса кайнă. Фашистсен пульлисенчен сыхланса юлнă çынсем ăçта куç курнă çавăнталла саланса пěтнě. Станица пушанса юлнă.

Фашистсем Верхне-Чирская станцăна та çавăн пекех çаратса ишěлтернě. Лысов хуторěнче тахçанах пулса çитнě тулла выракан никам та çук. Тырă вырма фашистсем аран ура çинче тăракан старихсемпе ача-пăчасене мобилизациленě. Вăй çитмен, ěçрен пăрăнма пăхакансене пурне те тискеррěн хěнесе пěтернě. Пухнă тырра кунта пěр пěрчě юлмиччен чугунçул станцине ăсатнă.

Голубински хуторěнче гитлерла вăрă-хурахсем колхозниксен килти выльăх-чěрлěхěсене пěтěмпех çаратса пěтернě. Мало-Голубая станицăра оккупантсем, мěнпур халăха малтан çаратса пěтерсе, станицăран хăваласа кăларнă.

Тарса пытанма ěлкěреймен çитěннě арçынсене тата хěрсене—казачкăсене нимěçсем çěмěрěлсе пěтнě, таса мар вагонсем ăшне хупаççě те, вагон алăкěсем çине пломбăсем хурса, Германие каторгăна ăсатаççě.

**Н. МАРКОВСКИЙ. Д. ЩУКИН.**

## *Çěрулми пусси патěнче*

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ. Ку ěç фронт çывăхěнчи вырăнта пулса иртнě. Çěрулми пусси патěнче пěр боец ларнă. Унăн аллисем нÿрě тăпрапа вараланнă, унпа юнашар çěнě çěрулми тултарнă котелок пулнă.

Çывăхран иртсе пыракан Андреевпа Вазанов красноармеецсем боецăн çакнашкал ěçěнчен тěлěннě.

— Мěн тăватăн вара эсě кунта, йěкěт?

— Çěрулми кăлартăм.

— Мěн тума? Мěнле чаçран эсě?

— Кунти... Кÿршěри чаçран...

Андреевпа Вазанов пěр-пěрин çине пăхса илнě. Вěсен умěнче палламан çын, тата апат хатěрлессе те вăл красноармеецла мар хатěрлет.

— Айда, каяр пирěнпе пěрле хамăрăн чаçа.

Çулпа пынă чухне, çын котелок çинчен манса кайсе, васкасах кěсъинче темěн шырама пуçланă. Вăл темěнле хутсем туртса кăларса сисиччен вěсене çăтса яма та хăтланнă.

— Кунта эсě колхоз çěрулмине вăрланă, халě ав темěнле хутсем çиес-шěн,—тенě те Андреев, палламан çын çине сиксе ÿксе, ун аллинчи хутсене туртса илнě. Лешěн ăнсăртран гимнастерка çухавě вěçерěннě те çутă япала курăнса кайнă. Красноармеец форми айěнче нимěç офицерěн мундирě пулнă.

Кайран, колхоз çěрулмине «юратаканскерпе» тěплěнрех паллашсан, çав çын тахçанхи шпион, фашистла партин членě, ятарласа шпионсен шкулне вěренсе пěтернěскер, пулни паллă пулса тăнă. Пěр диверсиллě ушкăнпа пěрле ăна пирěн войскăсем вырнаçса тăнă çěре янă пулнă.

**А. АРНОЛЬДОВ.**

## Аслă шкулсенче вěренÿ октябрěн 1-мěшěнче пуçланать

СССР Совнаркомě çумěнчи аслă шкул ěçěсен Комитечěн приказě тăрăх, 1942—43 вěренÿ çулěнче аслă шкулсенче занятисене октябрěн 1-мěшěнче пуçламалла тунă. Çавăн пекех ВУЗ-сене çěнěрен кěрекенсен заявленийěсене йышăнассине, аслă шкулсене вěренме илмелли испытанисемпе вěренме илессине пěр уйăхлăха тăснă. (ТАСС).

## *Фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăх*

### Вунăкунлăхра кĕлтесене капана хывса çитеретпĕр

КУКЕÇ, сентябрĕн 7-мĕш. (Телефонпа). Тырпулсене пухса кĕртес ĕçсене вĕçлес тĕлĕшпе фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăх пĕтиччен 3 кун юлтĕ. Çак хушăра пирĕн районри колхозсем кĕрхипе çурхи тырăсен кĕлтисене капана хывса пĕтереççĕ. Паянхи кун тĕлне район вырса пуçтарнă çĕр лаптăкĕн 49,6 процентĕ çинчи кĕлтесене капана хывса, 35 процентĕ çинчи тырра çапса кĕртнĕ. Районри 98 колхозран 14-шĕ кĕрхипе çурхи тырăсен кĕлтисене капана хывнă, 7 колхоз авăн çапса пĕтернĕ.

Фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăха хутшăнса, районри колхозсем кĕлтесене капана хывас ĕçе сентябрĕн 10-мĕшĕнчен, авăн çапас ĕçе октябрĕн 10-мĕшĕнчен кая юлмасăр вĕçлеме обязательство илнĕ. Çак обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçласа, «Красный флот», «Молния», «Осоавиахим», «Красная заря» колхозсем авăн çапса пĕтерчĕç, çĕрулми кăларма тытăнчĕç.

Паянхи кун тĕлне районĕпе 131 гектар çинчи çĕрулмине кăларнă. Малтан кăларнă шултăра та типĕ çĕрулмине колхозсем государствăна параççĕ. Ĕнерхи кун тĕлне районри 17 колхоз 1942 çулхи обязательствăсене шучĕпе государствăна çĕрулми парса татнă.

«Красный флот», «Осоавиахим» колхозсенче çĕрулмине плугсемпе сухаласа кăлараççĕ.

Районри колхозсем çитес кунсенчех çĕрулмине массăллăн кăларма тытăнаççĕ. Çĕрулми кăларма хатĕрленнĕ май, вĕсем халĕ нӳхрепсемпе овощехранилищесене юсаççĕ, çĕнĕрен тăваççĕ. Çак кунсенче «Правда» колхоз — 40 тонна, «Крахмал» колхоз 30 тонна çĕрулми вырнаçмалăх çĕнĕ нӳхрепсем турĕç.

**Н. ВАСИЛЬЕВ.**
**Шупашкар райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ.**

### Лайăх пуçарăва сарса пыман

ÇЕРПУ, сентябрĕн 7-мĕш. (Телефонпа). Красноярски крайри паллă сухаçă Валентин Нагорный, суха лашисене тăтăшах улăштарса тăрса, суха тăвас ĕçре пысăк çитĕнӳ тунă хыпар пĕтĕм çĕршыв тăрăх саралчĕ. Анаткас Кипекçери «Ĕмĕт» колхоз членĕсем Константин Сергеевпа Павел Семенов августăн 31-мĕшĕнче кĕрхи çĕртме тăвас ĕçре унăн меслечĕпе усă курма тытăннă. Вĕсем вăл кун 4-шар гектар ытла сухаланă.

Çак çитĕнĕве вĕсем мĕнле тунă-ха? Нагорный пуçарăвĕ тăрăх, вĕсем кĕрхи çĕртмене тухичченех 4-шар плуг юсаса хатĕрленĕ. Колхоз вĕсене 4-шар лаша уйăрса панă. Пĕрремĕш бригадăри Павел Семенов иккĕмĕш бригадăри Константин Сергеевпа ăмăртса ĕçленĕ.

— Нагорный чухлĕ сухаличчен хиртен тавăрăнмастпăр, — каласса килĕшнĕ вĕсем.

Колхозниксен йăли çапла: каланă — тунă. «Ĕмĕт» колхозри малтанхи нагорновецсем — Константин Сергеевпа Павел Семенов çав кун лашисене виçĕ сехет хыççăн улăштара-улăштара кӳлнĕ, 18 сехет хушши ĕçленĕ. Ĕç хыççăн вĕсем мĕн чухлĕ сухаланине бригадирсем шутласа пăхнă: Константин Сергеев — 4,07 гектар, Павел Семенов — 4,03 гектар сухаланă. Колхозри çамрăк нагорновецсем малтанхи кунах тăватшар çыншăн ĕçленĕ.

Анчах бригадирсемпе колхоз правленийĕ çак лайăх пуçарăва малалла сарса пыма тăрăшман. «Çĕр хытăрах-ха, çумăр çăвиччен кĕрхи çĕртме тума тăхтас», — тесе çамрăк нагорновецсене тепĕр куннех урăх ĕçе куçарнă, лашисемпе кĕлте кӳме тытăннă.

Суха тăвас çĕрте нагорнăйла ĕçлени лаша вăйĕпех тухăçлăн сухалама май парать. Валентин Нагорный меслечĕ — вăрçă вăхăтĕнче ĕçлемелли чăн-чăн меслет. Çавăнпа кашни колхозникĕн унăн меслечĕпе ĕçлеме тытăнмалла.

### Хăвăрт та тухăçлăн ĕçлеççĕ

СОВЕТСКОЕ, сентябрĕн 7-мĕш. (Телефонпа). Тырă вырса пĕтерсе кĕлтесене капана хывас, авăн çапас тата государствăна тырă парас ĕçсене хăвăрт туса пыракан колхозсен хисепĕ кашни кунах ӳссе пырать. Фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăха хутшăннă хыççăн район 3.000 ытла гектар çинчи кĕлтесене капана хывнă, 2.245 гектар тыррине çапнă. Турай ялсоветĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз (колхоз председателĕ Иванов юлташ) кĕлтесене капана хывса пĕтерне. Ку ĕçре уйрăмах Н. Семенов юлташăн бригади малта пырать. Вăл кĕлтесене капана хывас ĕçе 5,5 кун хушшинче вĕçлерĕ. Кĕлте турттаракансем П. Владимиров, Ф. Семенов юлташсем ĕç нормине 150—160 процент, капан тăвакансем Г. Васильев, П. Волков юлташсем—150—170 процент тултараççĕ.

Молотов ячĕпе тăракан колхоз членĕ —67 çулхи Ефрем Титов куллен 50—60 урапа кĕлтине капана хывать, ĕç нормине 225—250 процент тултарать.

Районри чылай колхозсем çĕрулмине суйласа кăларма тытăнчĕç. Колхозсем çĕрулмине массăллăн кăларма тухиччен нӳхрепсене, пахча-çимĕç тăварлама катка-пичкесене йĕркене кĕртеççĕ.

Сталин ячĕпе тăракан колхоз çĕрулми пуçтарма хăваран 50 корзинка хатĕрленĕ. Молотов ячĕпе тăракан колхоз хăяр тата купăста тăварлама 4 катка, çĕрулмине пуçтарса йăтма 15 йывăç ещĕк хатĕрленĕ. Халĕ пахча-çимĕç тата çĕрулми типĕтекенсене курссенче вĕрентсе хатĕрлетпĕр.

**М. ЮХТАРОВ,**
**Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ.**

### Комбайнпа 332 гектар вырса пухнă

ШĂХАСАН, сентябрĕн 7-мĕш. (Хамăр корр.). Машинно-тракторнăй станцинче 5-мĕш бригадăн комбайнерĕ Михаил Тимофеев юлташ 1940 çулта 525 гектар тырă вырнă. Ăна çавăн пек пысăк тĕслĕх кăтартнăшăн комбайнпа вырас ĕçĕн мастерĕн ятне панă.

Хăйĕн комбайнне лайăх ремонтласа хатĕрлесе, Тимофеев юлташ, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва тухса, кăçал «Коммунар» комбайнпа 300 гектартан кая мар тырă вырса пухма обязательство илнĕ. Çак обязательствăна пурнăçа кĕртес хавалпа вăл куннесĕрне пĕлмесĕр ĕçлет, кашни кун 18-шар гектар тыррине вырса пухать. Унăн комбайнĕ пĕр чарăнусăр ĕçлет. Ĕçри пĕчĕк кăлтăксене комбайнер хăвăрт пĕтерсе пырать. Çапла ĕçлесе вăл план тăрăх 110 гектар вырас вырăнне, паянхи кун тĕлне 332 гектар вырса плана 300,2 процент тултарчĕ, 233 килограмм горючи перекетлерĕ.

**С. ШАДИН.**

### *ЛАЙĂХ ĔÇЛЕКЕН ТИМĔРÇĔ*

КАЛИНИНО. Тури Карачурари «Ленин çулĕпе» колхозăн тимĕрçи М. Николаев юлташ уборка вăхăтĕнче хăйĕн ĕçне татах та лайăхлатрĕ. Вăл ялхуçалăх машинисене юсама кирлĕ пайсене вырăнтах туса хатĕрлерĕ. Жнейкăсемпе лобогрейкăсем пĕр чарăнмасăр ĕçлерĕç.

Кĕрхи тырăсене акса хăварас умĕн те Николаев юлташ сеялкăсене тĕплĕн ремонтларĕ, çавăнпа вĕсем пĕр чарăнусăр ĕçлерĕç. Колхоз кĕрхи тырăсен пысăк пайне сеялкăсемпе акса хăварчĕ.

**Б. ШОРНИКОВ.**

### Хатĕрлев пунктĕнчи çитменлĕхсене халех пĕтермелле

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Хатĕрлев пунктне лавсем килсех тăраççĕ. Колхозсем ăнса пулнă тырпула хăвăртрах пуçтарса илсе государствăна пама тăрăшаççĕ. Анчах хатĕрлев пунктĕнче ĕçлекенсем çавăрăнăçусăр ĕçленине пула, инçетрен пынă колхозниксен тырă пама темиçе сехет хушши кĕтсе тăма тивет. Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем сортировкăна кĕтсе виçĕ сехет ытла ларнă. Вĕсене технорук Соловьева юлташ сортировка тупса пама пулнă та хăй киле апат çиме кайнă. Апатран килсен, ун çинчен пачах манса кайнă.

Михĕсем, шăналăксем çитменни те ĕçре чăрмантарать. Калăпăр, анчах тиесе килнĕ тырă кăштах чĕрĕрех, ăна хĕвел çинче типĕтмелле. Анчах, шăналăксем çитмен пирки, вăл ĕç вăрăма тăсăлать. Турханти «Комбинат» колхозран килнĕ лавăçсем икĕ кун хушши «тулă типĕтсе» ларнă.

Хатĕрлев кантурĕ çĕнĕ тырра йышăнса илме кирлĕ пек хатĕрленменни çакăнтан та курăнать: складсенчен пĕр склачĕн урайне халь тин сарма тытăннă, тепĕр склачĕн çиĕ шăтăк, çумăр çусан шыв каять.

— Ман шутпа, эпир ăна витме ĕлкĕретпĕр, халь йышăнма ытти складсем пур, — тет технорук Соловьева юлташ.

Хатĕрлев пунктĕнче хĕрлĕ кĕтес организациленĕ. Унтан пĕрер экземпляр «Чăваш Коммуни», «Красная Чувашия» тата 2 экземпляр районри «Социализмлă ĕç» хаçатсемсĕр пуçне нимĕн те çук. Патефонăн пружини татăлнă, вăл ахалех выртать, купăс охранниксем патĕнче, радио кĕртмен. Тырă пама килекенсем хушшинче калаçусем ирттерессине организацилемен. Культработник Федоров юлташ кунĕпех балалайка каласа ларать, урăх нимĕн те тумасть.

Хатĕрлев пунктĕнчи çак çитменлĕхсене халех пĕтермелле.

**Х. ЛИСИН.**

### Уроксем хыççăн—пучах пухма

КАНАШ, сентябрĕн 7-мĕш. (Телефонпа). Янкăлчри вăтам шкулăн кĕçĕн класĕсенче вĕренекенсене Ф. Андреевăпа К. Акимова учительницăсем уроксем хыççăн куллен Каганович ячĕпе тăракан колхозăн хирне пучах пуçтарма илсе тухаççĕ. Çамрăк патриотсем вĕренĕве колхозри ĕçпе çыхăнтарса, колхоза пысăк пулăшу параççĕ. Вĕсем икĕ кун хушшинче пĕр центнера яхăн пучах пухнă.

**Ф. МАЛЫШКИН.**

### Ачасен ясли

ТĂВАЙ. Вăтаялĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра уборка ĕçĕсем пуçлансанах ачасен яслине уçнă. Унта 127 ача. Яслĕре таса та çутă. Ачасем валли уйрăм алшăллисем пур. Кашни ача апата уйрăм тарелкăран çиет. Яслĕре кашни ача валлиех пĕчĕк пукансем, вылямалли теттесем пур. Яслĕре ĕçлекенсем А. Масленникивăпа К. Борисова юлташсем хăйсен ĕçне юратса тăваççĕ.

Ачасен ясли уборка ĕçĕсене вĕçличченех ĕçлет.

**В. ФИЛИППОВ.**

## Шкулсемпе больницăсене вутă çителĕклĕ хатĕрлесе памалла

Ялсенчи шкулсене, больницăсене, вулав çуртĕсене кирлĕ вутта вырăнти топливо промышленносĕн леспромхозĕсемсĕр пуçне Чăвашлесзагăн районсенчи конторисем хатĕрлеççĕ. Чăваш АССР Совнаркомĕ панă план тăрăх, виççĕмĕш кварталта çав конторăсен пурĕ 30 пин кубометр вутă хатĕрлемелле. План пĕчĕк мар. Çак плана тултарас тесен, районсенчи вăрман хатĕрлекен организацисен вăрçă вăхăтĕнчи хăвăртлăхсемпе ĕçлемелле, Чăвашлесзагăн вĕсене тимлĕн ертсе пымалла. Анчах Чăвашлесзаг районсенчи хăйĕн органĕсене тимлĕн ертсе пырать тесе калама çук-ха. Ку вăл çакăнтан та лайăх курăнать. Чăвашлесзагăн ертсе пыракан работникĕсем вырăнсенче ĕç мĕнле пыни çинчен калакан сведенисене те вăхăтра илсе тăраймаççĕ. Сентябрĕн 3-мĕш кунне çитсе те вĕсем августăн малтанхи вунăкунлăхĕнчи сведенисемпе лараççĕ. Çав сведенисем тăрăх ялсенчи шкулсем, больницăсем тата ытти çуртсем валли вутă хатĕрлес ĕçĕн 3-мĕш квартал планне республикăра 30 процент çеç пурнăçланă. Чăвашлесзаг, çавăн пекех иккĕмĕш квартал планне те тултарайман. Çапла вара, ялсенчи культурăпа çутĕç учрежденисем валли вутă хатĕрлес ĕç кварталтан квартала юлса пырать.

Сăлтав, пуринчен ытла, ĕç вăйĕ çителĕксĕррине. Вутă хатĕрлеме кирлĕ ĕç вăйне—çынсемпе лашасене— парти райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсен колхозсенчен уйăрса памалла. Анчах райкомсемпе райисполкомсем вутă хатĕрлевĕ çинчен час-часах манаççĕ. Август уйăхĕнче планпа пăхнă 690 çын вырăнне çуранлисем 30—40 çын çеç ĕçленĕ, лашапа ĕçлекенсем пулман та темелле. Чылай райлесзагсенче хăш-пĕр кун пĕр çын та ĕçлемен, халĕ те питĕ сахаллăн ĕçлеççĕ.

Çавна май районсенчи вăрман хатĕрлекен конторăсем пурте пекех плана тултарса пыраймаççĕ. Виççĕмĕш кварталта вутă хатĕрлес плана çулте асăннă срок тĕлне Кувакино, Йĕпреç, Хĕрлĕ Чутай, Сĕнтĕр, Советски, Шăхасан тата Пăрачкав райконторисем 4—5-шер процент çеç тултарнă. Пĕр Первомайскипе Октябрьски райконторисем кăна кирлĕ хăвăртлăхпа ĕçлеççĕ, вĕсем квартал планне 75 процента яхăн тултарнă.

Вутă хатĕрлесси—çур ĕç, унсăр пуçне тата хатĕрленĕ вутта вăхăтра турттарса тухмалла. Турттарасси хатĕрлессинчен юлса пымалла мар. Анчах чылай райлесзагсем çавна шута илмеççĕ, хатĕрленĕ вутта турттарса тухмасăр вырттараççĕ. Хĕрлĕ Чутай, Кувакино тата Пăрачкав райлесзагĕсем виççĕмĕш кварталта пĕр кубометр та турттарман. Советски, Сĕнтĕр, Ишлей райлесзагĕсем те ку тĕлĕшпе юлса пыраççĕ. Çулте асăннă вăхăт тĕлне республикипе те 3.455 кубометр çеç турттарса тухнă, виççĕмĕш кварталти плана 19 процент тултарнă.

Вутта потребительсен хăйсен ытларах турттарма тивет. Çапла тунă çĕрте ĕç те ăнăçлăрах пырать. Куславкка райлесзагĕ, сăмахран, шкулсемпе больницăсене хăйсене турттартарса, плана 66 процент тултарнă. Турттарас ĕçе ытти районсенче те çавăн пек органиэацилес пулать. Унпа пĕрлех райлесзагсен хăйсен пур пек транспорчĕпе, автомашинисемпе туллин усă курмалла. Анчах хальхи вăхăтра райлесзагсенче пĕр автомашина та ĕçлемест-ха.

Районсенчи вăрман хатĕрлекен организацисен тивĕçĕ шкулсемпе больницăсене кирлĕ вутта вăхăтра тата çителĕклĕ хатĕрлесси пулать. Парти райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсен вĕсене çак ĕçре тимлĕн пулăшса пымалла. Çакна ăнланса илмелле: шкулсем, больницăсем, вулав çурчĕсем валли вутă хатĕрлесси, тырпулсене уйран пуçтарса кĕртесси пекех, пысăк ĕç. Ялти культурăпа çутĕç учрежденисене вутă лайăх хатĕрлесе панинчен вĕсен кĕркуннепе хĕллехи ĕç ăнăçлăхĕ килет. Халĕ çутта кăларас, сывлăха сыхлас тата ытти çавăн пек ĕçсене пĕр чăрмавсăр туса пымалла.

**Т. ИВАНОВ.**

## *Ют çĕршывсенче*

### Иккĕмĕш фронт уçма май пур çеç мар, ăна тата халех уçмалла

ЛОНДОН, сентябрĕн 5-мĕш. (ТАСС). «Младе ческословенске» журнал «Дьепп районне пырса тапăнни иккĕмĕш фронт уçма май пуррине тата уçма кирлине кăтартрĕ» ятлă умстатья пичетлесе кăларнă. Çав статьяра çапла каланă: «Дьепп районне пырса тапăнни çакна уççăн кăтартса пачĕ: çар, техника тата стратеги енчен пăхсан, континентра халех иккĕмĕш фронт уçма май пур çеç мар, тата ăна халех уçмалла.

Пирĕн халăха тата Европăри пусмăрта пурăнакан халăхсене хăратса тăракан хăрушлăх, пирĕн тĕрĕс, паттăр союзника—Совет Союзне хăратса тăракан хăрушлăх, пирĕн правительствăна юлашки чăрмавсене пĕтерсе лартмашкăн тата хĕвеланăçĕнче иккĕмĕш фронта халех уçмашкăн çине тăрса ыйтма хушса тăрать. Çавăн пек ĕнтĕ пирĕн—пурте союзник тесе йышăннăскерсен тата Чехословаки халăхĕн представителĕсен тивĕçлĕхĕ; Чехословаки халăхĕ умĕнче иккĕленсе тăнă пирки тата хăюлăх çитмен пирки хальхи вăхăтра нумайччен чурара пурăнас тата ăна вĕлерсе пĕтерес хăрушлăх тăрать».

### „Пĕрлешнĕ çĕршывсен вăйлă наступлени пуçласа ямалли вăхăт çитрĕ"

#### Америкăра тухакан журнал иккĕмĕш фронта хăвăртрах уçма кирли çинчен

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 5-мĕш. (ТАСС). Иккĕмĕш фронт çинчен «Нэйшен» журнал çапла çырать: «Вырăссем вăйлăн та пĕлсе çапăçнине асăрхаса тăнă вăхăтра эпир хамăртан хамăр çапла ыйтатпăр: май уйăхĕнче, нимĕçсем хĕвелтухăçнелле çĕнĕрен наступлени пуçласа янă вăхăтра, Англипе Америкăн экспедициллĕ вăйĕсем нимĕçсене хĕвеланăçĕнчен пырса тапăннă пулсан, эпир халь ăçта пулнă пулăттăмăр ĕнтĕ, тесе ыйтатпăр. Питех те паха виçĕ уйăх иртсе кайрĕç. Пĕрлешнĕ çĕршывсем вăйлăн наступлени пуçласа ямалли вăхăт çитрĕ», тет.

### *Рузвельт радио тăрăх тухса калани*

ВАШИНГТОН, сентябрĕн 4-мĕш. (ТАСС). Студентсен пĕтĕм тĕнчери съезчĕ уçăлнă майпа Рузвельт радио тăрăх сăмах тухса каланă. Гитлерла пропаганда çав съезда хирĕç питĕ çуйăхса калаçнине тата çавăн пек майпа съездăн организаторĕсене варалама хăтланнине палăртса, Рузвельт çапла каланă: «Çак съезд пирки нацистсем мĕншĕн тарăхнине ăнланса илме йывăрах мар. Нацистсемпе фашистсем çамрăксене вилĕмсĕр пуçне нимĕн те сунма пултарайманнине пĕтĕм тĕнче пĕлет. Тепĕр енчен, пĕрлешнĕ çĕршывсен ĕçĕ пĕтĕм çамрăксен ĕçĕ пулса тăрать. Çакă вăл—çĕнĕ ăрăвăн шанчăкĕ, ирĕклĕ те тĕрĕслĕхлĕ çĕнĕ пурнăç çине шанса тăни».

Оккупациленĕ çĕршывсенчи çамрăксем захватчиксене хирĕç геройла кĕрешенине Рузвельт тивĕçлипе палăртнă.

Унтан Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен хĕçпăшаллă вăйĕсен главнокомандующийĕ пулса тăракан Рузвельт Америка çарĕн çамрăк салтакĕсемпе морякĕсене (тата летчикĕсене, мĕнпур фронтсенче çапăçаканскерсене, ирĕклĕхшĕн пурнăçа хĕрхенмесĕр активлăн кĕрешме чĕннĕ.

Рузвельт малалла тĕнчене вăрçă хыççăн урăхлатса йĕркелесси çинчен чарăнса тăнă. Ун чухне çамрăксен мĕнпур экономикăллă, культурăллă тата политикăллă интересĕсене пĕтĕмĕшпех тивĕçтерĕç,—тенĕ вăл.

### ГИТЛЕРЛА ВĂРĂ-ХУРАХСЕМ «ЫЙĂХРАН САЛХУЛЛĂН ВĂРАНАÇÇĔ»

СТОКГОЛЬМ, сентябрĕн 5-мĕш. (ТАСС). Гитлерла пуçлăхсенчен пĕри—Лей «Ангрифф» хаçатра вăрçăн виçĕ çул хушшинчи итогĕсене пĕтĕçтернĕ. Лей «васкавлă та çăмăл çĕнтерӳ» кĕтекенсене тапăнать. Вăл çавнашкал нимĕçсене «вĕтĕр-шакăр çынсем» тесе ят парать, анчах çав вăхăтрах çавнашкал ултавлă ĕмĕтсене гитлерла пуçлăхсем хăйсем те сарнине йышăнать. «Çакна йышăнма лекет,—тесе çырать вăл,— Дюнкерк хыççăн тата Париж парăнсан, Балканри кампание туса ирттернĕ хыççăн тата Крит утравне йышăнса илсен, эпир пурте çав ырă ĕмĕте парăннăччĕ, эпир унчухне çĕнтерӳ тунă хыççăн мĕн тăвасси çинчен шухăшлаттăмăрччĕ». Анчах та вăрçăн çав событийĕсем,—тесе кăтартса парать Лей,— çавтери пысăк йывăрлăхсемпе хăрушлăхсем кӳрекен хальхи вăрçăн «умсăмахĕ» кăна пулнă. Çав чăн-чăн вăрçа Германия ССР Союзне хирĕç вăрçма тытăнсан кăна туйса илчĕ. Çав самантран пуçласа, — тесе йышăнать Лей,— «пирĕн çарти тата тылри жертвăсем пысăк пулчĕç, мĕншĕн тесен тăшман вăйлă пулчĕ. Вăрçă хаярланнăçемĕн хаярланса кайрĕ, тытса илнĕ анлă çĕр талккишĕ кӳрекен йывăрлăхсем, транспортпа снабжени йывăрлăхĕсем вĕçĕ-хĕррисĕр пысăк килсе тухрĕç. Нумайăшĕсемшĕн çакă вăл ыйăхран салхуллăн вăранни, çĕнтерӳллĕ савăнăçран хаяр чăнлăх патне куçни пулса тăчĕ».

### ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ХОРТИН ТЕПĔР ХУРАНТАШНЕ ВĔЛЕРНĔ

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 4-мĕш. (ТАСС). Будапештра официальнăй йĕркепе Хортин кĕрӳшĕ граф Юлиус Карольи «авиацире катастрофа пулнă чухне вилни» çинчен пĕлтернĕ. Будапештра Карольине те гестапо Хортин ывăлне—Венгри вице-регентне Иштван Хортине çак кунсенче вĕлернĕ пекех вĕлернĕ пирки пĕртте иккĕленмеççĕ. Çак вице-регента вĕлернĕ хыççăн Венгрири влаçра тăракан çынсем хушшинче çĕнĕ вице-регента кама лартасси пирки пысăк тавлашу тухса кайнă. Хорти çывăхĕнчи çынсем çав вырăна лартма Юлиус Карольин кандидатурине палăртнă, вăл аристократин представителĕ пулса тăрать, тенĕ. Анчах та çав кандидатурăна гитлеровецсем пĕрех те кăмăллаôман, вĕсем Хорти çывăхĕнчен е пушшех те Хорти çемьинчен кама та пулсан вице-регент вырăнне лартма парасшăн мар. Берлин вице-регент вырăнне хăйĕн тӳрĕ агентне — эрцгерцога Альбрехт Габбургские лартма хистенĕ. Çавна пула пысăк тавлашу тухса кайнă, гитлеровецсем вара, Иштван Хортине вĕлернĕ пекех, Карольине те вĕлерме шут тытнă курăнать.

### ОККУПАЦИЛЕНĔ ÇĔРШЫВСЕНЧЕ

Оккупациленĕ çĕршывсенчи хресченсем хăйсенчен çаратса илнĕ продуктсене Германие яма мĕн вăй çитнĕ таран кансĕрлеççĕ. Бельгире оккупациллĕ влаçсем хăйне уйрăм судсем тăваççĕ. Тырра вăрланăшăн тата тĕрĕслекен органсен представителĕсене тапăннăшăн вĕлермелле тăваççĕ.

Словакире тырра официальнăй йĕркепе ирĕк пани çинчен калакан хута кăтартсан çеç авăртма пултараççĕ. Тырă хуçисенчен тата мельниксенчен, вĕсем тырра влаçсене парассине шанчăклă тума, 2 пин кронран пуçласа 20 пин крона çитиччен залог илеççĕ.

Франци халăхĕн пурнăçĕ ытла та начарланса пырать. Темиçе миллион çынна выçлăх хăратса тăрать.

Продовольстви çитменни уйрăмах та хуласенче питĕ хытă палăрать. Пĕр хаçатăн корреспонденчĕ çапла çырать: 8—12 çулхи ачасем, халран кайнăскерсем, çĕтĕк-çатăк тумланнăскерсем, çӳп-çап ещĕкĕсенче апат-çимĕç юлашкийĕсене шыранине хам куртăм, тет.

Грецин фашистсем оккупациленĕ утравĕсенче халăхăн пурнăçĕ уйрăмах йывăр. Унта начарланса кайнипе куллен çĕршер çын вилет. Оккупантсем çав утравсем çинче, пĕтĕм Грецири пекех, тискеррĕн тыткалас йĕрке туса хунă. (ТАСС).

### ФИНСЕН ФАШИСТЛА ХАÇАЧĔ ВĂРÇА ХИРĔÇ ШУХĂШ-КĂМĂЛСЕМ УСНИПЕ ПĂШĂРХАНАТЬ

СТОКГОЛЬМ, сентябрĕн 5-мĕш (ТАСС). Финсен «Аян Суунта» ятлă фашистла хаçачĕ Финляндире тĕрлĕ сăмах-хыпарсем анлăн саралнипе пăшăрханса çырать. «Сернес (Хельсинкин рабочисем пурăнакан районĕ) çавăн пек сăмах-хыпарсене саракан центр пулса тăчĕ пулас,—тесе çырать хаçат.—Унта противника пулăшас текен çынсем пурăнаççĕ пулмалла. Вĕсем кашни кунах çĕнĕ те çĕнĕ сăмах-хыпар кăларса яраççĕ те, вăл хыпарсем вара çийĕнчех пĕтĕм хулана саралаççĕ. Мир ыйтăвĕ пирки питех те тĕрлĕ хыпарсем çӳреççĕ».

### ЛА-МАНШ УРЛĂ АРТИЛЛЕРИРЕН ХИРЕ-ХИРĔÇ ПЕНИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 5-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: сентябрĕн 5-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англин Дувр районĕнчи инçете перекен батарейисемпе Германин Булонь тата Кале районĕсенчи батарейисем пĕр пĕрин çине нумай вăхăт хушши мар, анчах вăйлăн артиллерирен хире-хирĕç персе тăнă.

### АНГЛИ АВИАЦИЙĔ БРЕМЕН ÇИНЕ ВĔÇСЕ ПЫРСА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 5-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, сентябрĕн 5-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем Бремен çине вĕçсе пырса тапăннă. 11 бомбардировщик хăйсен базисене тавăрăнман.

## СОВЕТ СОЮЗĔ ТĂРĂХ

### СОВЕТ ПАТРИОЧĔСЕМ—АМАННĂ БОЕЦСЕНЕ

Калинин облаçĕнчи ĕççыннисем аманнă боецсемпе Хĕрлĕ Çарăн командирĕсемшĕн ăшă кăмăлпа тăрăшаççĕ. Юлашки 3—4 кун хушшинче вĕсем госпитальсене сĕт продукчĕсем, пахча-çимĕçсем, çăмартасем, пыл, варени, çырласем, табак нумай панă тата темиçе пин кĕнеке панă.

Калинин хулинчи пĕр завод хăй шефа илнĕ госпитальре рентген кабинечĕпе физика кабинетне юсаса панă тата 50 кровать туса панă. Тепĕр завод пукансем, тенкелсем, тумбочкăсем туса панă. Пĕр станцири железнодорожниксем госпиталь валли савăт-сапа нумай пухса панă тата госпитале 7 вагон йывăç панă. 4 пин работницăпа килхуçи хĕрарăмсем госпитальсенче дежурнăйсем пулса тăраççĕ. Хальхи вăхăтра ĕççыннисем госпитальсене хĕле кĕме пулăшаççĕ—кăмакасене юсаççĕ, торф хатĕрлеççĕ, вутă касаççĕ. (ТАСС).

### ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ ВĂРÇĂ ИНВАЛИЧĔСЕН ÇУРЧĔСЕМ

РСФСР Социальнăй обеспечени Халăх Комиссариачĕ отечественнăй вăрçăн инваличĕсем валли 126 çурт тунă. Инвалидсем хăйсем ыйтнă тăрăх, çав çуртсенче çĕнĕ специальноçсене вĕренес ĕçе организациленĕ, ăна опытлă педагогсем ертсе пыраççĕ. Çапла, акă, Тутар АССР Наркомсобесĕн çуртĕнче канакан 320 инвалидран 120 инвалид счетоводсемпе бухгалтерсен курсĕсенчен вĕренсе тухнă, халĕ ĕнтĕ вĕсем çав çĕнĕ специальноçсемпе ĕçлеççĕ. (ТАСС).

—◦—

### ХАÇАТСЕНЧЕН

«Сельхозгиз» государство издательстви тырпула пухса кĕртес кампани валли 20 ята яхăн кĕнеке тата 32 листовка кăларнă.

Пичетрен тухнă кĕнекесенчен ялхуçалăхĕн механизаторла çамрăк кадрĕсем валли кăларнă пособи пысăк вырăн йышăнса тăрать. Комбайн, молотилка, трактор çинчен тата зерносушилкăсене мĕнле ансатрах тумалли çинчен çырнă кĕнекесем пур.

Листовкăсенче—малта пыракан колхозсен, совхозсен, МТС-сен опычĕпе усă курса, пĕрчĕллĕ тырăсене, хĕвелçаврăнăша, сахăр кăшманне, табака тата ытти культурăсене мĕнле пухса кĕртмелли çинчен канашсем панă. («Известия»).

* * *

Саратоври супăнь тăвакан «Тежжирпром» заводĕ çурçул хушшинче вырăнти чĕртавартан тата тĕрлĕ каяшсенчен 500 тонна супăнь тата 100 тонна çемçе супăнь туса кăларнă. («Правда»).

* * *

Бакура всевобучăн иккĕмĕш черетĕнче вĕренекенсем вĕренĕве срокченех вĕçленĕ. Ленински районри нефть кăларакансем вĕренӳре уйрăмах пысăк çитĕнӳсем тунă. Çав район минометчиксем, автоматчиксем, снайперсем, танксене хирĕç кĕрешекенсем питĕ нумай вĕрентсе кăларнă. («Труд»).

* * *

Мускав çывăхĕнчи кăмрăк бассейнне юсакан стахановец-строительсен слечĕ пулса иртнĕ. Гитлерла оккупантсем çĕмĕрсе пĕтернĕ шахтăсене юсаса ĕçе ярас пирки «Сталиногорскшахстрой» тресчĕн управляющийĕ Тюксеев юлташ доклад туса панă.

Слет участникĕсем (правительство вĕсен ĕçне орденсем, медальсем парса наградăланă пулнă) тунă çитĕнӳсемпе лăпланса лармастпăр тесе сăмах панă. Слет правительствăн заданине вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек тултарма тата çĕнĕ шахтăсене срокченех ĕçе яма чĕнсе çырнă. («Известия»).

**Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.**


**Чебоксарскому филиалу Энерготрансучтекстиль**
СРОЧНО ТРЕБУЮТСЯ на постоянную работу:
1. Преподаватель по автоделу,
2. Методист по энергокадрам (инженер-энергетик),
3. Шоферы-инструктора по монтажно-демонтажным занятиям,
4. Шофера-инструктора по практической езде.
Работу могут выполнять инвалиды отечественной войны.
За справками по всем вопросам обращаться по адресу; г. Чебоксары, ул. Володарского 5, 2-й под'езд, канцелярия филиала.
Дирекция.
2—1

**Наркомзему на постоянную работу требуются:**
**Гл. бухгалтер, бухгалтер, ревизор по МТС, ревизор по бюджетным организациям, экономист-финансист.**
С предложением обращаться по адресу: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса 7, Планово-финансовый отдел Наркомзема.

**Трест производит набор учащихся** на курсы по подготовке водителей машин
Срок обучения 1,5 месяца.
Начало занятий—15 сентября.
Курсанты обеспечиваются общежитием и стипендией. Принимаются мужчины и женщины.
Обращаться по адресу: ул Володарского, Дом печати, комната № 46,с 14 до 16 час. ежедневно.
2—1


РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 925 Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф 4. 58 84 п. л.